Ял тăрăхĕсенче

Пĕрлехи ыйтусене пĕрлех татса памалла

Пурнăç та иртет, вăхăт та малаллах шăвать. Сисмерĕмĕр те, çĕнĕ çулталăкăн иккĕмĕш уйăхĕ те хыçа юлчĕ темелле. 131-мĕш Федераллă саккун вăя кĕнĕренпе те пиллĕкмĕш çула кайрĕ ĕнтĕ. Мĕнле улшăнусем пулса иртрĕç-ха çак тапхăрта Шетмĕпуç ял тăрăхĕнче пурăнакан çынсен пурнăçĕнче, палăртнинчен мĕн тума хевте çитернĕ, мĕн туса çитереймен, малашне мĕнле задачăсем тăраççĕ? Çак ыйтусем çине хуравлама ыйтрăм эпĕ Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхне Николай Поликарпович АЛЕКСАНДРОВА. Вăрттăнлăх мар, ял тăрăхĕн администрацийĕн ĕçĕ-хĕлĕ шăпах ĕнтĕ вырăнта пурăнакансен кулленхи пурнăçĕпе, вĕсен ыйтăвĕсене епле тивĕçтернипе тата татса панипе çыхăннă.

– Малтанах хамăр патри демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăрупа паллаштарнă пулăттăм. Анчах та тӳрех каламалла, вăл паянхи куна лăплантарма пултарайماсть. Хальхи вăхăтра пирĕн тăрăхра 1300 çын ытла пурăнать. 2008 çулта 13 ача çуралчĕ тата 23 çын вилчĕ пулсан, иртнĕ çул 1 ача ытларах çуралчĕ тата 2 çын ытларах вилчĕ. Апла пулсан çынсен йышĕ чакса пыни куçкĕрет. Кунта сăлтавсене тĕрлĕрен асăнма пулать, анчах та ку ытларах ялсенче уйрăмах çамрăксем валли çурт-йĕр çавăрса семьеллĕ пурнăçпа пурăнма кирлĕ условисем туса панипе, вĕсен культура, йăла, социаллă ыйтăвĕсене туллинрех тивĕçтернипе çыхăннă. Юлашки вăхăтра ялта пурăнаканшăн яланлăх ĕç тупасси проблема пулса тăни те витĕм кӳретех. Пирĕн пĕлтерĕшлĕ ку задачăсене паян-ыран татса пама майсем çителĕксĕртерех пулин те, асăннă ыйтусене куç ытамĕнчен вĕçертмелле мар тесе шутлатăп.

Çулсен ыйтăвĕ ялсенче яланах чи çивĕччисенчен пĕри пулнă. Иртнĕ çулсенче пур ял патне те йĕркеллĕ асфальт çулсем çитерме май килчĕ пулин те, ял урамĕсен хушшисенче ку тĕлĕшпе татса памалли ыйтусем çук мар. Çавна шута илсе иртнĕ çул ял урамĕсенчи çулсене кăштах та пулин йĕркене кĕртес тесе тăрăшман мар. Кашни ял урамнех çул япăхса кайнă вырăнсене юсама хăйăр турттартăмăр, тăватă ялта вырăнăн-вырăнăн вак чул сартăмăр.

Ытти çулсенче хăш-пĕр урамсене çĕрлехи вăхăтра çутатса тăма счетчиксем лартнă пулсан, пĕлтĕр Шетмĕпуçĕнчи Молодежная урамра та счетчик вырнаçтартăмăр. Паянхи куна счетчиксем вырнаçтарманни виçĕ ял юлать. Кусем вĕсем Тивĕш, Автанкасси, Карманкасси ялĕсем. Кунта чăрмавĕ – пиллĕкмĕш кабель пулманни.

Ял халăхĕпе пĕрле пирĕн тăрăхри виçĕ масара йĕркеллĕ тытса тăма тăрăшатпăр. Вĕсене çуллен тасататпăр, территорисене тирпейлетпĕр. Пĕлтĕр Тивĕшри масар йĕри-тавра сеткăпа 200 метр тăршшĕ карта тытрăмăр. Шетмĕпуçĕнче вара 80 метр ракатка карта тытнă. Масарсен территорийĕсенче вырнаçтарма çӳп-çап валли тăватă контейнер хатĕрлерĕмĕр.

Тавралăха тирпей-илем, илемлĕх кĕртес ĕçсене шкул ачисене те явăçтарма тăрăшатпăр. Иртнĕ çул кăна шкул ачисен вăйĕпе 1000 тĕп ытла йывăç лартса хăварнă. Çавăн пекех Шетмĕпуç паркĕнче 300 тĕм чăрăш лартрăмăр.

Физкультурăпа спорта, сывă пурнăç йĕркине пропагандăлама тăрăшатпăр. Хамăр территорире тĕрлĕ ăмăртусем сахал мар йĕркелетпĕр. 2009 çулта та 7 ăмăрту ирттертĕмĕр. Кашни çулах хĕл ăсатăвĕн, иккĕмĕш çул ĕнтĕ Акатуй уявĕсене йĕркелетпĕр. Акатуй уявне Турхан садĕнче ирттерме пуçларăмăр. Иртнĕ çул унта сцена туса лартма та май тупрăмăр.

Тĕрлĕ мероприятисене, калăпăр, Аслă Çĕнтерӳ уявне, Ватă çынсен кунне тата ыттине те ирттерме укçатенкĕ сахал мар кирлĕ. Анчах та ял тăрăхĕн хысни чухăнрах. Çавăнпа та вырăнти мероприятисене ирттерме спонсорла пулăшу пама хатĕррисене – Виталий Павлова, Анатолий Васильева, Владимир Петрова, Владислав Волкова, Николай Ильина, Виталий Горбунова, Владимир Павлова, Альберт Петрова, Регина Вениаминована, Олег Клементьева тата ыттисене пысăк тав сăмахĕ каланă пулăттăм.

Вырăнти депутатсен ĕçĕхĕлĕ те çăмăл мар. Вĕсен умне те кăткăс тата укçатенкĕпе çыхăннă ыйтусем сахал мар сиксе тухаççĕ.

Чăннипех те ĕнтĕ хальхи вăхăтра ял çыннине çăмăл теме çук. Апла пулин те малашлăха пăхма пĕлекен, хăйĕн çине ытларах шанакан çын темĕнле йывăрлăхра та çухалса каймасть. Юлашки вăхăтра ялсенче ĕç çук тесе алă усса ларакансен йышĕ чакса пырать. Пĕрлешӳллĕ хуçалăх саланнă май ытларахăшĕ халĕ килти хушма хуçалăха аталантарас çул çине тăчĕ. Çавăнпа та малтанхи çулсенче çĕр участокĕсене харпăрлăха илес шутлисен хисепĕ пысăк пулман пулсан, халĕ вĕсен йышĕ ӳсет. Çак вăхăта 150 çын ытла ĕнтĕ харпăр хăйĕн çĕр пайĕсене саккунлă майпа харпăрлăха куçарнă. Килти хушма хуçалăха аталантарма çăмăллатнă кредитсем илекенсем те çук мар. Юлашки çулсенче пушă выртакан çĕрсене илсе вĕсемпе усă курас шухăшлисем те йышланаççĕ. Паянхи куна уйрăм çынсен хуçалăхĕсенче 40 ытла трактор, груз турттармалли 10 автомашина, 4 комбайн тата ытти техника хатĕрĕ шутланать.

Тепĕр пысăк проблема вăл – преступленисемпе кĕрешесси. Пирĕн патра милицин участокри инспекторĕ пулса Д.Ю. Семенов ĕçлет. Вăл преступленисене уçса парассипе кăна мар, вĕсене асăрхаттарассипе, йĕркелĕхе упрассипе те чылай тăрăшать. Çавна пулах ĕнтĕ иртнĕ çул преступленисем тăвассине палăрмаллах чакарма май килчĕ. 2008 çулта пирĕн ял тăрăхĕн территорийĕнче 15 преступлени регистрацилене пулсан, пĕлтĕр – 6 преступлени.

Çавна хушса каласа хăварни те вырăнлă. Преступленисене ытларах чухне эрех ĕçсе ӳсĕрĕлсен тăваççĕ. Спиртлă тĕрлĕ шĕвек сутакансем вара ялсенче çук мар. Вĕсемпе çине тăрса кĕрешес пулать. Вăрттăнлăх мар, мĕн чухлĕ çын хальхи вăхăтра пĕлнĕ-пĕлмен спиртлă шĕвек ĕçсе пурнăçпа сыв пуллашать. Çакă пулса тăрать те ĕнтĕ маларах асăннă демографи ыйтăвне лайăхлатассипе ура хуракан сăлтавсенчен пĕри. Унпа вара пĕччен кĕрешни пуш параппан çапни кăна, пĕтĕм халăх инкекĕпе пĕтĕм халăхпа кĕрешес пулать.

Кăçал туса ирттермелли ĕçсем çинче чарăнса тăрас пулсан вара, хăмарăн пурăнакан кил-çурт таврашĕнчен тытăнса ял урамĕсем, ялсем, тавралăх таранах тирпей-илем кĕртесси, ученчи илемлĕхе сыхласа хăварасси пирки çине тăмалла. Урам хушшисенче яланах йĕрке пултăр.

Шыв ыйтăвне те кун йĕркинчен кăларма пултараймастпăр. Паянхи куна шыв уçлакан башньăсене пăхса тĕрĕслесе тухса БТИ урлă документсене хатĕрленĕ ĕнтĕ. Кайран вара вĕсене эпир хамăр баланс çине илнĕ хыççăн тытса тăма тата унпа усă курма килĕшӳ туса пĕр-пĕр организаци парăпăр.

Çапла, кирек епле ĕçе пурнăçласси те хальхи вăхăтра укçа-тенкĕпе çыхăннă. Çавна май бюджета пуянлатмалли майсемпе май килнĕ таран туллинрех усă курас пулать. Иртнĕ çула илес пулсан, ку енĕпе япăхах ĕçлемен, бюджетра хăмăрăн тупăш виçине 352,3 пин тенкĕ пăхса хунă пулсан, 555,4 тенкĕ тупăш туса плана 157,6 процент тултарнă. Апла пулсан мĕн туни чикĕ мар, алла-аллăн тытăнса тачăрах çыхăнса ĕçлесе пыни кирлĕ. Пирĕн ыйтусене никам та килсе татса парас çуккине пурин те туйса илме вăхăт.

В. ШАПОШНИКОВ
калаçнă.

Хаклав

Тăхăр сыпăк таран

Ман алăра тин çеç пичетленсе тухнă кĕнеке. «Эпир Итам раттинчен» ятлă вăл, районти Оринин тăрăхĕнчи çынсем çинчен. Ăна районти паллă таврапĕлӳçĕсем, чылай çул хушши Оринин шкулĕнче ачасене вĕрентнĕ Раиса Ивановапа Маргарита Матросова хатĕрленĕ.

Кĕнекен тĕп шухăшĕ пирки унăн редакторĕпе – ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕпе П.К. Андреевпа калаçрăм:

– Паянхи яшсемпе хĕрсене, ача-пăчана тата килес ăрусене ĕлĕкхипе хальхи ĕçсем çинчен пĕлтересшĕн таврапĕлӳçĕсем,– терĕ Петр Кузьмич.– Ку кăларăм кукаçисемпе кукамисене, маçаксемпе мамаксене, аттесемпе аннесене, пиччесемпе аппасене – пур тăвана хисеплесе пурăнма, вĕсен ячĕсене яланах асра тытма кирли çинчен аса илтерсе тăтăр, теççĕ вĕсем. Кĕнекере 450 ытла сăн ӳкерчĕк, темиçе ăруриӳсĕмри çынсен сăнарĕсем,– терĕ вăл.

Анчах кирлĕ-и-ха пĕр ялти темиçе кил-йыш шăпи çинчен çырнине хаçат урлă пурне те пĕлтерме? Итам раттинчен тухнă 100 ытла çемьерен халĕ Орининта пурăнакан 7 çемье çинчен çырнă кĕнеке ял çыннисемшĕн, редактор калашле, хисеплĕ парне пулни çителĕклĕ мари-ха? Çак шухăш алла кĕнеке тытиччен канăç памарĕ мана.

Таврапĕлӳçĕсем Итам раттин 9 сыпăкне тĕпчесе пĕлнĕ. Апла пулсан ку йăх Атăл хĕрринчи çĕр çинче темиçе ĕмĕр каярах тĕпленнĕ. Итам ратти – аслă çĕр çинчи пинпин йăхран пĕри, хăйĕн ĕçĕхĕлĕпе, йăли-йĕркипе, чĕлхипе пурăнакан халăхăн пĕр пайĕ.

«Пирĕн ратăра хальлĕхе космонавт та, паллă ăсчах та çук-ха, апла пулин те эпир хамăрăн мăн асаттемĕрсемпе, асаннемĕрсемпе мухтанма пултаратпăр, вĕсем хăйсен умне тухса тăнă йывăрлăхсене çĕнтерсе пынă, Итам раттине çухалма паман»,– теççĕ таврапĕлӳçĕсем. Кĕнекере вун-вун тĕрлĕ ĕçпе – тыр-пул çитĕнтернипе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнипе, кил-çурт çавăрнипе, хуртхăмăр пăхнипе, ал ĕçĕпе, кирлĕ чухне алла хĕç-пăшал тытса çĕршыва хӳтĕлесе хăварнипе тата пурнăçăн ытти нумай майĕсемпе Итам раттине сыхласа хăварнине сăнласа панă. Шăпах çакă мари-ха Оринин çыннисем малашне те хăйсен раттине, республикăна упрассишĕн тăрăшнине кăтартакан ырă чăнлăх? Апла пулсан кĕнеке пирки хаçат вулакансем пĕлни вырăнлă тесе шутлатăп.

Юлашки çулсенче çăвамасарсене тирпейлесе йĕркене кĕртес ырă йăла вăй илме пуçларĕ. Кунпа пĕрлех кашни кил-йышрах çак йăх аталанăвне çырса хăварма тытăнсан аван пулĕччĕ. Мăн асаттесемпе асаннесене манас марччĕ.

Павел КРЫСИН.
Шупашкар хули.

Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнĕ май

Ватăсене саламларĕç

Эс мĕнле пурнатăн, аякри тăван?
Юррăма юрлатпăр, эс илтсем ялан.
Сассăм, эсĕ вĕç сар кун çĕршывне,
Хĕмленсе çунтар тăван чĕрине...

Çакăн пек ăшă сăмахсене илтсен ватă çыннăн чунĕ те савăнать. Мĕн кирлĕ-ши ватă çынна пирĕнтен? Ăшă сăмах çеç.

Каршлăхри ĕçпе вăрçă ветеранĕсен интернат çуртĕнче 25 ветеран ăшă вырăн тупнă. Çак ватăсем вăрçă вăхăтĕнчи кунĕсене пĕрре те куççульсĕр аса илеймеççĕ. Анчах та кунта ĕçлекенсем вĕсене сăпайлă та ырă кăмăлĕсемпе эмел вырăнне сиплеççĕ.

Акă пирĕн ватăсене Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ ячĕпе Ильинка тăрăхĕнчи Вăрманкассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи «Тăван Атăл» пултарулăх ушкăнĕ килсе илемлĕ юрăсемпе саламларĕ. Вĕсене çирĕп сывлăх, телей тата юрату сунчĕç.

Пирĕн те вара артистсене тав сăмахĕ калас килет. Тавах сире пирĕн ватăсене манманшăн, вĕсене хисеп туса килнĕшĕн.

В. КРЮЧКОВА, культорг.
Сăн ӳкерчĕкре: концерт хыççăн.

Пенси ыйтăвĕсемпе

Заявленисен хисепĕ ӳсет

2009 çул итогĕсене илес пулсан, Муркаш районĕнче пухăнакан пенсисене инвестицилеме ыйтса заявлени çыракансен хисепĕ 1,5 хут ытла ӳснĕ. Иртнĕ çул районĕпе 641 çын (Чăваш Республикипе 60 пин çын ытла) пухăнакан пенси пайне ăçта йĕркелесси пирки йышăну тунă.

Районĕпе йышăннă заявленисенчен 25 проценчĕ (республикипе 80 процент) – Раççей Пенси фондĕнчен патшалăхăн шутланман пенси фончĕсене куçасси пирки. Районĕпе 1 заявлени (Чăваш Республикипе заявленисен 13 процентне яхăн) патшалăхăн шутланман пĕр пенси фондĕнчен тепĕр пенси фондне куçасси пирки. Патшалăх обязательнăй пенси страховани ĕçне хутшăнма патшалăхăн шутланман 128 пенси фондне ирĕк панă пулсан, Чăваш Енре пурăнакансем вĕсенчен 20-шне суйласа илнĕ. Вăл шутран ытларах заявленисем – пирĕн республикăра филиалĕсем пур патшалăхăн шутланман пенси фончĕсем. Патшалăхăн шутланман пенси фончĕсене куçнисен (енчен те вĕсем малашне хăйсен шухăшне улăштармаççĕ пулсан) пенсин пухăнакан пайне хушса пырассине, йĕркелессине тата тӳлесе тăрассине вĕсем суйласа илнĕ фонд хăй çине илет.

Районĕпе заявительсенчен 479-шĕ (республикипе 3 пин çын ытла) патшалăхăн шутланман пенси фончĕсенчен Раççей Пенси фондне куçма кăмăл тунă. Кунпа пĕрлех заявительсем ертсе пыракан 58 компанирен патшалăхăн ертсе пыракан компанине суйласа илнĕ. Çапла вара заявительсен пухăнакан пенсине суйласа илнĕ ертсе пыракан компани хушса пырĕ, Раççей Пенси фончĕ пухăнакан пенсие йĕркелесе тата тӳлесе тăрĕ.

Пенсин пухăнакан пайĕ валли страховани взносĕсем хăçан та пулин тӳленĕ çынсен пурин те пухăнакан пенсисене инвестицилеме право пур. Тĕпрен илсен, вĕсем 1967 çулта çуралнă арçынсемпе хĕрарăмсем тата унран çамрăкраххисем, кунпа пĕрлех хăш çулта çуралнине пăхмасăрах – патшалăхăн софинансировани программине хутшăнакансем.

Заявленисене çуллен декабрĕн 31-мĕшĕнчен кая юлмасăр Раççей Пенси фончĕн кирек хăш управленийĕнче те, çавăн пекех трансферагент центрĕсенче – алă пуснисене пĕр-пĕри çирĕплетессипе Раççей Пенси фончĕпе килĕшӳ тунă банксенче, патшалăхăн шутланман пенси фончĕсенче тата ытти организацисенче те çырса пама пулать.

О. АЛЕКСЕЕВА.

Вулакан пултарулăхĕ

«Çамрăклăх» ярăмран: 1980-мĕш çулсем

Сенкер тĕслĕ чечекне
Патăм тантăш пикене.
Пĕлтĕр куç эп хывнине,
Вăл мана килĕшнине.

Пиçсе çитнĕ çырлине
Халалларăм савнине.
Туйтăр эп юратнине,
Маншăн питĕ хаклине.

Тулли уйăх çутинче
Ыталарăм пикене.
Сенкер чечек куççенче,
Çырла тути тутинче.

Ах, чечекĕм те çырлаçăм,
Маншăн ĕмĕр чĕрере.

П. ВОРОБЬЕВ.